Н56
4-42650

Зоя Нестерова

# Пурҫӑн пӗлӗт айӗнче



Национальная библиотека ЧР
4-042650

Обязат Ч84.09(=Чув
Н56

Зоя Нестерова

# Чурçăн пĕлĕт айĕнче



*Сăвăсем*

Шупашкар
2009

УДК 821.512.111
ББК 84(2 Рос = Чув) 6 – 5
Н 56

НЕСТЕРОВА ЗОЯ АЛЕКСЕЕВНА.
Пурçăн пĕлĕт айĕнче (Под
шелковистыми облаками). Сăвăсем.-28 стр.
Шупашкар, 2009.
Редактор В.Н.Алексеев.
Набор, верстка Р.Поповой.
Формат 60х84/32. Бумага офсетная.
Тираж 50 экз.

© Нестерова З.А., 2009.

4-42650

ПРОВЕРЕНО
2010

## Паллă çыравçă

Зоя Алексеевна Нестерова 1925 çулхи раштав уйăхĕн 24-мĕшĕнче Красноармейски районĕнчи Анат Кушар ялĕнче çуралнă. Упири вăтам шкулта, Чăваш патшалăх педагогика институтĕнче вĕреннĕ. Комсомольски районĕнчи Чурачăк ялĕнчи вăтам шкулта, каярахпа тăван Упи шкулĕнче ачасене вырăс чĕлхипе литературине вĕрентнĕ. Çав вăхăтра «Ялав» журналта «Кĕтмен çыру» калавĕ пичетленсе тухнă. Качча тухсан шăпа ăна Магадан облаçĕнчи район центрĕн Ягодное поселокне илсе çитерет. Унта тивĕçлĕ канăва тухиччен çитĕнекен ăрăва пĕлӳ панă çыравçă. Мăшăрĕпе, Василий Алексеевич Нидаевпа, икĕ ывăл пăхса ӳстернĕ вĕсем. 1977 çултанпа çемье Шупашкарта пурăнать. Зоя Нестерован паллăрах кĕнекисем: «Чее мулкач» (1984), «Ванюш курнă тĕлĕнтермĕшсем» (1987),«Ылтăн пĕрчисем» (1991), «Арçынсем те макăраççĕ» (2003). Халĕ сăмах ăсти юрату, çутçанталăк, тăван тавралăх çинчен пикенсех сăвăсем шăрçалать.

## Çуралса ӳснӗ ен

Çуралса ӳснӗ ен, эс – ачалăх сăпки,
Хумханатăп санпа тĕл пулсан.
Пурнăç панă кĕтес, çамрăк ĕмĕр сакки,
Манран çутă салам йышăнсам.

Çуралса ӳснӗ ен – уй-хирсем,
вăрмансем,
Мĕншĕн-ши манаймастăп сире?
Тăпăл-тăпăл ялсем, лапсăркка
йăмрасем
Курăнаççĕ мана тĕлĕкре.

Çуралса ӳснӗ ен – çырмасем, пĕвесем,
Ма çаплах астаратăр мана?
Пысăк мар йывăç пӳрт, анкарти,
хурăнсем
Тунсăхпа хускатаççĕ чуна.

Çуралса ӳснӗ ен, эс – ачалăх сăпки,
Савăнатăп сана тĕл пулсан.
Пурнăç панă кĕтес, çамрăк ĕмĕр сакки,
Манран ăшă салам йышăнсам!

## Тăван шкул

Тăван шкул, эс ман шавлă ачалăх,
Эп паян сан патра хăнара.
Чунăма ыталать-çке ачашлăх,
Иртнисем çывхарас асăмра...

Вунă çул эс манпа пĕрле утрăн,
Çунат патăн хĕрӳ ĕмĕте,
Вăй-хала пĕлӳпе çирĕплетрĕн,
Çул кăтартрăн сенкер инçете.

Ĕмĕр çурă çаплах ăс паратăн
Ӳсекен ăрăва ыр сунса.
Юбилей ячĕпе саламлатăп
Савнă шкулăм, сана тав туса!

## Кĕрешӳ

Вăшăтр-вăштăр ăшă çил
Килчĕ çитрĕ, анчĕ çĕр çине.
Канăçне çухатрĕ Хĕл Мучи,
Алăкран шаккать, ав, çуркунне.

Çамрăк çур хăвалать, васкатать,
Килĕшмест, хăмсарать Шур сухал.
Туйипе шăн çĕре шарт! çапать,
Кĕрешме унăн пур-ха вăй-хал.

Сывлăшра çил-тăман çавăрать,
Хупăрлать, çухатать çул-йĕре.
Шăнкăр-шăнкăр шывран пăр тăвать.
Шăннă кантăк çине тĕр тĕрлет.

Йăлтăр-йăлтăр чипер çуркунне
Йăл кулать, хăрамасть Мучирен.
Сар хĕвел сирпĕтет вут-хĕмне,
Ăшă хум вăйланать кунсерен.

Чакрĕ, тарчĕ сив хĕл çурçĕре,
Ун куççулĕ те кайрĕ юхса.
Кайăк-кĕшĕк юрлать тӳпере
Ырă ăшă куна мухтаса.

## Сиплӗ ҫур

Сивӗ Хӗл хуралса, хурланса
Юхса кайрӗ шывпа шавласа.
Вăшăтр ҫил саламлать ҫут куна,
Ыйхăран вăрататъ таврана.

Шăннă ҫӗр ăшăнать, вăйланать,
Ҫут ҫанталăк ҫӗн тум тăхăнать.
Ҫамрăк ҫур шеллемест пурлăхне,
Нӳрӗкне те илет ҫӗр-анне.

Пахчара тӗрлӗ ҫимӗҫ ӳсет,
Темӗн чухлӗ ҫырла ешерет.
Уй-хирте хумханать тырă-пул,
Кӗр ҫитсен парнелет пысăк мул.

Ҫитӗн, ҫитӗн, ҫӗклен, ҫут илем,
Кунран-кун вăй пухса чечеклен.
Сиплӗ ăшă чупать ҫӗр ҫине,
Эх, илемлӗ-ҫке эс, ҫуркунне!

## Ах, шăрăх...

Кайăксем вăранчĕç, кун пуçланчĕ,
Ăшă хуса ячĕ сулхăна,
Акă шăрăх та кĕçех хускалчĕ,
Хăвăрт сапаланчĕ таврана.

Кунĕ лăпкă, сывлама та йывăр,
Сар хĕвелĕ çиçет, çунтарать.
Сывлăш пăчă, чун-чĕрене тăвăр,
Мĕн чĕрри сулхăна пытанать.

Йывăçсем те пуçĕсене уснă,
Типнĕ çĕр антăхать шыв ыйтса.
Çумăр, çумăр, эс ăçта çухалнă№
Тупăн, кил, шăпăртатат савăнса!

# Çуллахи çумăр

Анăçран хура пĕлĕт шăвать,
Тĕксĕм чатăр хуплать тӳпене.
Вутлă çип ялтлатать, çутатать,
Аслати кисретет тĕнчене.

Анăçран хура пĕлĕт шăвать,
Сиплĕ шыв тăкăнать çĕр çине,
Типнĕ çĕр иленет, савăнать,
Уншăн халь ку чи хаклă парне.

Пуç çинчен хура пĕлĕт иртет.
Ак каллех йăлкăшать кун çути,
Аякра йăлтăр çиçĕм çиçет,
Катаран сас парать аслати.

Анăçран вăштăр çил вăркăшать,
Хăвалать, салатать пĕлĕте.
Çĕр-анне ĕнтĕ канлĕн сывлать,
Пуç таять, тав тăвать тивлете.

## Ылтăн кĕр

Тĕксĕмленнĕ çанталăк çуталчĕ,
Сивĕ пĕлĕт çухалчĕ умран.
Сар хĕвелĕ куçа йăмăхтарчĕ,
Ăшă çилĕ лăпкарĕ пуçран.

Капăрланнă вăрман хыпса илчĕ
Сарă, хĕрлĕ, кĕрен çулçăпа.
Салхуланнă тĕнче илемленчĕ
Тур пилленĕ кĕрхи савăкпа.

Сиплĕ сывлăш чуна çупăрларĕ,
Епле усă, хаваслă инçет!
Йăлкăш çутă куçа ыталарĕ,
Тӳпере пурçăн пĕлĕт çиçет.

Ылтăн кĕр, ĕмĕрӳ вăрăм мар сан,
Ăнланатăп — каятăн кĕçех.
Ырă, ăшă, хаваслă кунсемшĕн
Тав тăватăп сана пурпĕрех.

## Тĕксĕм вăхăт

Салхуланчĕ çанталăк, хурланчĕ,
Сар хĕвел тек пăхмасть тӳперен.
Тĕксĕм пĕлĕт хыçне вăл пытанчĕ
Сивĕ хĕл çывхарать кунсерен.

Иртекен çу кунне шеллесе-ши
Çут çанталăк йĕрет куççульпех,
Тĕттĕм сивĕ кĕре питлесе-ши
Çил ачи туллашать кунĕпех.

Йăмăх тумлă çанталăк хуралчĕ,
Таврана хупăрлать кĕр тĕнчи.
Пуç çинчен сенкер пĕлĕт сухалчĕ,
Çывăхрах, ав, юнать Хĕл Мучи.

## Хӗл пуҫламӑшӗ

Акӑ ҫитрӗ, килчӗ хӗл,
Ҫӑмӑл юр вӗҫет вӗл-вӗл,
Пӑрлӑ ҫӗре хупӑрлать,
Кӗр тӗксӗмне ҫутатать.

Хӑвӑрт улшӑнчӗ тӗнче,
Ҫӗнӗ тум халь ун ҫинче.
Улт кӗтеслӗ ҫӑлтӑрсем
Кӑпӑш йӑлтӑр пӗрчӗсем.

Савӑнать ачи-пӑчи,
Ёнтӗ килчӗ Хӗл Мучи!
Ав, ларать юр кӗлетке,
Пуҫӗнче ун шӗлепке.

Тухрӗ йӗлтӗрпе Ванюш,
Ҫунашка туртать Ануш.
Купаласчӗ тӑвайкки
Чи чапли, чи пысӑкки.

Юр ҫӑвать, сив хӗл ларать,
Кӳлнӗ ут ҫуна туртать.
Вӗҫсе килчӗҫ чакаксем,
Кӑшкӑраҫҫӗ кураксем.

## Хӗл илемӗ

Пурҫӑн тумлӑ йӑлкӑш пӗлӗт
Астарать, чӗнет пӳртрен.
Шурӑ кӑпӑш сивӗ хӗлӗ
Чӗпӗтет мана питрен.

Сар хӗвелӗ йӑлтӑр-йӑлтӑр
Сирпӗтет хӗмне инҫе.
Пин-пин тӗслӗ вӗҫсӗр ҫӑлтӑр
Вылянать ҫӗн юр ҫинче.

Йывӑҫсем те капӑрланнӑ,
Кӗмӗл тутӑр пуҫ ҫинче,
Шурӑ виткӗчпе хупланнӑ
Таврари мӗн пур тӗнче.

Илӗртет, ҫиҫет ҫӗр ҫийӗ
Йӑлкӑш ҫутӑ илемпе.
Шур сухаллӑ Хӗл Мучийӗ
Мухтанать хӑй тумӗпе.

## Çамрăк роза

Çамрăк роза ӳсет пахчара,
Тутлă шăрш чӳхенет сывлăшра,
Çурăлаççĕ хитре чечексем
Ытарма çук чипер чечексем.

Вăштăр-вăштăр ăш çилĕ чупать,
Ачашлать, савать, телей сунать.
Тивĕçпе мухтанать çĕр анне,
Шеллемест вăл ачишĕн вăйне.

Сар хĕвел те ăна юратать,
Кунĕпех ун тавра явăнать.
Шăпăр-шăпăр ăш çумăр çăвать,
Шăварать, тасатать, вăй парать.

Çамрăк роза ӳсет пахчара,
Çут илем ешĕрет таврара.
Çурăлаççĕ хитре чечексем,
Ытарма çук чипер чечексем.

# Хурӑн

Куҫ илемӗ, чечен ҫамрӑк хурӑн,
Вӑл ӳсет ҫут кӳлӗ хӗрринче,
Йӑрӑс пӳллӗ, тумӗ ҫутӑ пурҫӑн,
Вӗл-вӗл симӗс тутӑр пуҫӗнче.

Ун ҫине хӗвел пӑхать хаваслӑн,
Ун енне чупаҫҫӗ ҫут хумсем.
Вӑштӑр ҫил килсе лӑпкать ачашшӑн,
Куҫ хӗсеҫҫӗ ҫутӑ ҫӑлтӑрсем.

Пӗчӗк шӑпчӑк, пахллӑ чаплӑ юрӑҫ
Кӗвӗ хыҫҫӑн кӗвӗ парнелет,
Саламлать, сунать телейлӗ пурнӑҫ,
Кӗмӗл уйӑх шӑппӑн тӗмсӗлет.

Куҫ илемӗ, ҫамрӑк ҫепӗҫ хурӑн,
Эс ӳсен ҫут кӳлӗ хӗрринче.
Йӑрӑс пӳллӗ, туму шурӑ пурҫӑн,
Вӗлтӗр симӗс тутӑр пуҫ ҫинче.

## Тăвăл

Юрататăп сана, шурă хурăн,
Çамрăк хĕр пек эс йăрăс, чечен.
Çи-туму та хитре, шурă пурçăн,
Анчах мĕншĕн тăратăн пĕччен№

Урнă çил сасартăк пырса çапрĕ,
Çĕрĕпе тустарчĕ таврана.
Чупрĕ, аврĕ, шăхăрчĕ, лăскарĕ,
Тĕп тăвасшăн пулчĕ хурăна.

Парăнмарĕ çут илем, кĕрешрĕ,
Хирĕç тăчĕ тĕксĕм тăшмана.
Вăй-халне вара усал çухатрĕ,
Шăп шăпланчĕ ахăр самана.

Эп саватăп сана, шурă хурăн,
Эсĕ вăйлă, эс капăр, таса.
Мĕн çинчен шухăшлатăн-ши тарăн
Вĕлтĕр симĕс пуçна лăс усса?

## Хаклă ĕмĕтĕм

Кăнтăрла та, каç тĕттĕмĕнче те
Пуçăмра пĕр шухăш явăнать.
Пĕр сана курасшăн, тĕл пуласшăн
Çамрăк чунăм çулăмпах çунать.

Хаклă ĕмĕтĕм, телей çăл куçĕ,
Ма сана тĕл пултăм пурнăçра,
Çывăхра пулин те, маншăн эсĕ
Çутă çăлтăр евĕр аякра.

И-42650
НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

## Турă панă пилпе

Васкаса чупакан кунсем витĕр
Упраясчĕ чунри çулăма.
Вăй-хала вăл усратăр, ан сӳнтĕр,
Çутă патăр ялан асăма.

Кăвакарнă çӳçе сăрламастăп,
Илĕртмест ĕнтĕ шухă хавас.
Ватлăх çитрĕ тесе кулянмастăп.
Пурнăç çулĕ çапла. Мĕн тăвас...

Эп унпа пĕрле утăп хаваслăн
Шăрăхра, сивĕре, çил çинче,
Тĕттĕмпе кĕрешме пăрахмасăр
Тăвалла, Турă панă пилпе.

Эп кайсан, кам пĕлет, ăна çĕклĕ
Пĕр-пĕр çын ăнсăртран, тен, курса.
Килĕштерĕ, уçа-уçа вулĕ
Мĕн çырнишĕн мана тав туса.

## Çук, эпир...

Çук, эпир пĕр-пĕрне юратман,
Ăнсăртран тĕл пулсан, хумханман.
Пĕр-пĕриншĕн çунман чĕресем,
Çапла иртрĕç кунсем, уйăхсем.

Акă эсĕ утан васкасах,
Мана куртăн – тăхтарăн кăштах.
Каяп терĕн инçе. Сывă пул.
Ăсатса, ыр сунса алă сул.

Сывă пул... Пăхса юлтăм хыçран,
Йӳç тумлам юхса тухрĕ куçран.
Сивĕ тунсăх хуплать ăшăма,
Хĕстерет, амантать чунăма.

Мĕскер пулчĕ мана? Ма йĕреп?
Ма çаплах тăратăп? Мĕн кĕтеп?
Ăнсăртран çуралчĕ юрату,
Çунтарать чĕрене ырату.

Ăнсăртран çуралчĕ юрату,
Илсе килчĕ асап, ырату.
Телее сӳнтерчĕ уйрăлу,
Курăп-ши, пулать-ши тĕл пулу?

Ак такам шаккарĕ алăкран.
Уçса ятăм – эс умра тăран.

Саншăн килтĕм, терĕн, эс пĕрре,
Сан енне çеç туртать чун-чĕре.

Çук, эпир пĕр-пĕрне юратман,
Ăнсăртран тĕл пулсан савăнман.
Уйрăлу çуратрĕ юрату.
Уйрăлу пулмарĕ çухату.

## Асамат кĕперĕ

Инçетре аслати кĕмсĕртетрĕ,
Сайра çумăр юлхавлăн ташлать,
Кунĕ лăп, çулçăсем шавламаççĕ,
Тӳпере хура тĕс капланать.

Пĕлĕтре ялтăр çутă çĕкленчĕ,
Çичĕ тĕслĕ кăвар вут кĕпер.
Куç илемĕ, асамлă ӳкерчĕк,
Илĕртӳллĕ, хаваслă, чипер.

## Çил тăвăл

Уçрĕ çеç алăкне Хĕл Мучи,
Сикрĕ тухрĕ чарусăр ачи.
Шавласа, шăхăрса, уласа
Чупрĕ, вĕçрĕ пурне хăратса.

Сывлăшра çаврăнать шур тĕтре,
Хупăрлать, пытарать çул-йĕре.
Выльăх-чĕрлĕх тăрать витере,
Кайăк-кĕшĕк вĕçмест тӳпере.

Эп пăхса тăратăп кантăкран:
Ав, пырать пĕр çын аран-аран.
Урнă çил ӳкересшĕн тĕртет,
Юр кĕрпийĕ пит-куçран хĕнет.

Леш ашать, талпăнать пурпĕрех,
Ун тĕлленĕ çĕре çитмеллех.
Чăт, ан парăн, ан чак каялла,
Пурнăç çулĕ чĕнет малалла.

## Илем

Васкамасăр утатăп хирпе,
Таврана симĕс тум çупăрлать.
Кăн-кăвак , тап-таса çут тӳпе,
Вăштăр çил куçкалать, вăй вылять.

Тырă-пулă хуллен чӳхенет,
Пуç таяççĕ хитре чечексем.
Çепĕç кĕвĕ çӳлтен илтĕнет,
Шăратаççĕ ăста тăрисем.

Анчах пĕлĕт çĕкленчĕ умра,
Васкамасăр шăвать çӳлелле.
Кӳлепи сарлака, хуп-хура,
Сӳнтересшĕн пулас хĕвеле.

Ялт! çĕкленчĕ çăра тĕксĕмрен
Çичĕ тĕслĕ кăварлă кĕпер.
Капăр, çепĕç çиçет вут-хĕмре
Илĕртӳллĕ, сăваплă, чипер.

Çут тĕнче, эс пуян илемпе,
Тĕлĕнтермĕш, асамлă ăста.
Шăрăх-и, сивĕ-и, е йĕпе,
Илемӳ те пĕрлех, тупата.

## Кĕр мăнтăрĕ

Пĕр самант та çу кунĕ канмарĕ,
Пухрĕ, пухрĕ мулне, тупăшне.
Шутлă вăхăчĕ шурĕ те шурĕ,
Илсе килчĕ чăн-чăн кĕркунне.

Тыр-пула йĕркеллех вырса кĕнĕ,
Анкарти те чĕнет – кил, пуçтар.
Йăрансем тутлă çимĕç ӳстернĕ,
Çĕрулми, купăста та хăяр.

Пахчара йывăçсем ав кĕтеççĕ,
Авăнаç туратсем çимĕçпе.
Тутлă, сиплĕ пурлăхне сĕнеççĕ,
Татса ил те тутан – ан ӳркен.

Вăрманта çӳретĕн, пăхкалатăн,
Шĕшкĕ тĕмĕ мăйăрне парать.
Типĕ сулçă çĕкленнĕ – куратăн,
Шĕлепкеллĕ кăмпа саламлать.

## Ылтăн туй

Болеслав тăванăм, Варя кинĕм,
Тав тăватăп, килтĕм уява.
Хĕпĕртетĕп, савап, саламлатăп,
Парнелетĕп çак пĕчĕк сăвва.

Паян туй, ылтăн туй, кил уявĕ,
Ирттереççĕ хисепĕ çынсем.
Инçете ярăнать ун шăв-шавĕ,
Шăранаççĕ хитре кĕвĕсем.

Алă çул каялла купаланă
Çамрăк мăшăр çемье никĕсне.
Вăй-халне шеллемен, нушаланнă,
Çитĕнтернĕ ачи-пăчине.

Çитĕнтернĕ, вĕрентнĕ, ăс панă.
Çич ача, ывăл-хĕр, çăмăл мар.
Ӳссе çитрĕç, çĕкленчĕç, вăй илчĕç,
Пултаруллă, хисеплĕ, хастар.

Ашшĕ-амăш патне килсе çитрĕç
Ывăл-хĕрĕ çак паллă куна.
Кĕрӳшсем, кинĕсем, мăнуксем те,
Пурте хаклă, чи кĕтнĕ хăна.

*Е.М.Константинована халалласа*

***

Паян кунта ҫӗн пӳрт уявӗ,
Ҫанталӑк хӑй те саламлать.
Ҫӗклен ҫӳле, Упи ялавӗ,
Ҫавал ҫӗршывӗ савӑнать.

Хуҫи хаваслӑ, тараватлӑ
Кӗтсе илет хӑнисене.
Хисеплӗ ҫын-ҫке, пултаруллӑ,
Ҫӳлте тытать вӑл хӑй чысне.

Ачи-пӑчи, кӗрӳшӗ, хӗрӗ
Маттур, хисеплӗ те ӗҫчен.
Васкать, чупать хӑюллӑ чӗрӗ
Ир вӑранса сӗм ҫӗрлеччен.

Тулли сӗтелӗ тараватлӑ,
Телей сунса...
Черкке тытар...
Ура ҫине тӑрсах хаваслӑн
Ҫӗн пӳрт илнишӗн саламлар.

Паян кунта ҫӗн пӳрт уявӗ,
Юрлар, ташлар, сӑмах ваклар.
Хуҫисене телей сунар,
Чӗннишӗн чыслӑн тав тӑвар.

## Асамат кӗперӗ

Инҫетре аслати кӗмсӗртетрӗ,
Сайра ҫумӑр юлхавлӑн ташлать.
Кунӗ лӑп, ҫулҫӑсем шавламаҫҫӗ,
Тӳпере хура тӗс капланать.

Анӑҫра аслати кӗмсӗртетрӗ,
Тӗксӗм пӗлӗт хуплать тӳпене.
Ҫиҫӗм ҫиҫрӗ, ҫутатрӗ, ялтлатрӗ,
Ҫумӑр ҫитрӗ, ӳкет ҫӗр ҫине.

Сиплӗ шыв шӑпӑртатрӗ, ислетрӗ,
Ҫӗн хӑват парнелерӗ пурне,
Сывлӑша та тасатрӗ, нӳрлетрӗ,
Савӑнать, тав тӑвать ҫӗр-анне.

Пӗлӗте янкӑр ҫутӑ ҫӗкленчӗ,
Ҫичӗ тӗслӗ кӑвар, вут кӗпер.
Куҫ илемӗ, асамлӑ ӳкерчӗк
Илӗртӳллӗ, хаваслӑ, чипер.

## Йĕплĕ роза

Çамрăк роза ÿсет пахчара,
Тутлă шăрш чÿхенет сывлăшра.
Çурăлаççĕ ытти чечексем
Ытарма çук чипер-çке вĕсем.

Çамрăк роза ÿсет, ешерет,
Çутă савăк куçа илĕртет.
Тивĕçпе мухтанать çĕр-анне,
Шеллемест, парнелет сĕткенне.

Сар хĕвел те ăна юрататъ,
Кунĕпех ун тавра явăнать.
Шăпăр-шăпăр ăш çумăр çăвать,
Шăварать, тасатать, вăй парать.

Акă эпĕ пырап çывăхах,
Ах, татасчĕ – илемĕ умрах.
Анчах роза мана хăратать,
Йĕппи шĕвĕр, юнать, хăмсарать.

Çамрăк роза ÿсет пахчара,
Çут илем ешерет таврара.
Çурăлаççĕ ытти чечексем
Ытарма çук чипер-çке вĕсем.

# Тупмалли


Паллă çыравçă 3
Çуралса ӳснĕ ен 4
Тăван шкул 5
Ах, шăрăх 8
Çулахи çумăр 9
Ылтăн кĕр 10
Тĕксĕм вăхăт 11
Хĕл пуçламăшĕ 12
Хĕл илемĕ 13
Çамрăк роза 14
Хурăн 15
Тăвăл 16
Хаклă ĕмĕтĕм 17
Тур панă пилпе 18
Çук, эпир 19
Асамат кĕперĕ 20
Çил тăвăл 21
Илем 22
Кĕр мăнтăрĕ 23
Ылтăн туй 24
Е.М.Константинована асăнса 25
Асамат кĕперĕ 26
Йĕплĕ роза 27

